Çĕнтеруӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

95 (7412) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи ноябрĕн (чӳк) 15-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Кашни яла – асфальт çул

Такăр пултăр Юрпаш çулĕ

Паянхи пурнăçра авалхи йывăрлăха çĕнтерме çĕнĕ программăсемпе ĕçлеме тивет. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн çул-йĕр Программи ял пурнăçĕ çине ырă витĕм кӳрет. Çул çук ялта тулли пурнăç çинчен ĕмĕтленмелли çеç юлать. Унта васкавлă пулăшу машини çитеймест, пушар тухас пулсан та еплерех йывăрлăх пулĕ тата хуçалăх ĕçне те кирлĕ пек пурнăçлама çук.

Ноябрĕн 10-мĕшĕ Уйкас Янасал тăрăхĕнчи ял ĕçченĕсемшĕн чылайччен асра юлĕ. Çак кун Юрпаш ялĕ витĕр тухакан пĕр километр та çичçĕр метр тăршшĕ асфальт çула уçнипе тата ял уявĕ пулнипе паллă пулчĕ.

Ял ĕçченĕсем, шкул ачисем хăнасене çăкăр-тăварпа, кăпăклă чăваш сăрипе кĕтме тухнă. Уяв самантне Уйкас Янасал ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.И. Егоров уçрĕ. Ăшшăн саламларĕ, ялсене тирпей-илем кĕртесси малти вырăнта пулмаллине палăртрĕ. Раççейре тата республикăра пурнăçланса пыракан наци проекчĕсем çинче чарăнчĕ. Малалла сăмах район администрацийĕн пуçлăхне пачĕ:

– Паян сирĕншĕн питĕ савăнăçлă та асра юлмалли кун. Çак çула тăвасси ытла çăмăлах пулмарĕ, анчах та тăрăшсан темĕнле йывăрлăха та çĕнтерме пулать иккен. Çулталăк каялла çеç кунта пылчăк çăрăлчĕ пулсан, паян, ак, куратăр, епле сарлака, тикĕс çул сарăлса выртать. Çакăншăн пирĕн, паллах, чи малтан "Волгодорстрой" уçă акционерлă обществăра вăй хуракансене тав тумалла. Çулăн пуçламăшĕ пур, анчах вĕçĕ çук, тенĕ евĕр, малалла та вĕсене тусах пырасчĕ, – терĕ Ю.А. Иванов. Тăрăшулăхпа палăрнисене Тав хучĕсем парса чысларĕ.

Эпĕ "Волгодорстрой" пĕрлешĕвĕн Ю.И. Павлов мастерне асфальт çула сарас ĕçпе тĕплĕнрех паллаштарма ыйтрăм:

– Юрпаш ялне кĕрекен çула тума иртнĕ кĕркунне пуçăнтăмăр. Çырма тĕлĕнчи тапса тăракан виçĕ çăлкуç ĕçе кăштах вăрахлатрĕ, шыва курка-витресемпе ăсса тăмалла пулчĕ. Çакăнта манăн чи малтан С. Прохоров, Е. Ермолаев, Н. Васильев ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланăран тав сăмахĕ калас килет. Çавăн пекех Е. Соловьева бригадир, О. Смородинова рабочи, А. Иванов çамрăк экскаваторщик çанталăк чăрмавĕсене пăхмасăр хăйсен тивĕçĕсене тăрăшсах пурнăçларĕç. Кирлĕ йышши техника çителĕклĕ пулнă. В.В. Афанасьев участок ертӳçи кунти ĕçе тăтăшах пăхса йĕркелесе пычĕ.

Çулталăкăн кашни вăхăчĕ хăй илемĕпе савăнтарать. Хура кĕркунне вара йĕпе-сапапа пуян. Çапах та вăл пухăннисене чăрмав кӳмерĕ. Хĕрлĕ хăйăва касса ялăн тепĕр вĕçне çитсен Юрпаш ялĕн уявĕ пуçланчĕ.

Сăн ӳкерчĕкре: Юрпаш ялне кĕрекен çула хĕрлĕ хăю касса уçнă самант.

(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).

Ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен уявĕнчен

Ял хуçалăхĕ ура çине тăтăр

Шăмат кун, ноябрĕн 11-мĕшĕнче, Шупашкарта, Чăваш патшалăх операпа балет театрĕнче, ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноç предприятийĕсенче вăй хуракансен професси уявĕ иртрĕ. Савăнăçлă уява пирĕн районтан тыр-пул ӳстерекенсем, вильăх-чĕрлĕх пăхакансем, пĕрлешӳллĕ хуçалăх ертӳçисемпе специалисчĕсем, район администрацийĕн пуçлăхĕпе унăн çумĕ, пĕтĕмĕшле 44 çынран тăракан делегаци хутшăнчĕ.

Ял хуçалăх ĕçченĕсен савăнăçлă пухăвне Чăваш Республикин Президенчĕ Н. Федоров тата ял хуçалăх министрĕ М. Игнатьев хутшăнчĕç. Ял хуçалăхне аталантарасси, инноваци проекчĕсемпе усă курасси çинчен каларĕç.

Паллах, уяв парнесемсĕр иртмест. Пирĕн район çĕр ĕçченĕсем те хисепе тивĕçрĕç. "Свобода" (К. Сретинский) ял хуçалăх производство кооперативне республикăра 3-мĕш вырăна тивĕçнĕшĕн 60 пин укçан премипе тата Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине парса хавхалантарчĕç. Уй-хир ĕçĕсене хутшăннă ял хуçалăх техникине хĕллехи управа вăхăтра кирлĕ пек лартма пултарнăшăн "Герой" (Р. Тимофеев) ял хуçалăх производство кооперативĕ 2-мĕш вырăна тухма пултарчĕ. 15 пин укçан премие тата Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕç пулчĕ.

Çавăн пекех Măн Шашкарти Галина Геннадьевна Волкова килти хушма хуçалăха ăнăçлă аталантарнăшăн Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тата асăнмалăх пысăк парнене тивĕçрĕ. Вĕсем măшăрĕпе 2 гектар çĕр çинче тĕрлĕ пахча çимĕç ӳстереççĕ. Вильăх-чĕрлĕхрен те самай тупăш илме майсем тупаççĕ. Хальлĕхе вĕсем хуçалăхра сумалли ĕнесем виççĕ тата сыснасем тытаççĕ. Уяв савăнăçлă концертпа вĕçленчĕ.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Ыр кăмăллăх акцийĕ

Сахал тупăшлă çемьесене пулăшма

Халăх пĕрлĕхĕн кунне халалласа, районта "Ыр кăмăллăх эрни" иртнине пĕлетĕр ĕнтĕ. Ку ĕç малалла пырать. Хальхинче ăна ноябрĕн 26-мĕшĕнче уявлакан Амăшĕн кунне халалласçĕ. Аннесем вара хăйсен ачисене нихăçан та усал сунмаççĕ. Çавăнпа та хăвăр ачăрсем ӳссе çитĕннĕ пулсан, çав теттесем, тумтир сахал тупăшлă çемьесенчи ачасене телей патăр тесен, эсир вĕсене хăвăр ял тăрăхне, районти социаллă хӳтлĕх пайне илсе килме пултаратăр. Хăвăр ялта камсем мĕнле пурăннине сирĕнтен лайăхрах кам пĕлтĕр: эппин, паян ачалăх мĕн иккенне пĕтĕм чунчĕрепе туяйман ачасене ырă тума ан ӳркенĕр, ан именĕр. Вĕсене тăван ашшĕ-амăшĕ парса çитереймен çав савăнăçа эсир парнелетĕр пулсан, çакăнтан сăвапли мĕн пултăр. Ют ачасене ашшĕ-амăш юратăвне парнелеме ан манăр. Ют ачасене инкекре ан хăварăр.

Л. ПЕТРОВА.

Перекет банкĕнче

75 ветеран укçа выляса илчĕ

Перекет банкĕ 165 çул тултарнине халалласа унăн Муркашри уйрăмĕ пенси укçине çак банк урлă илекен пенсионерсем хушшинче выляв тиражне ирттерчĕ. Пĕтĕмпе вылява 3700 пенсионер хутшăнчĕ. Вĕсенчен 75-шĕ телейлисен шутне лекрĕç, укçатенкĕ выляса илчĕç. (Тираж паянхи номерăн 4-мĕш страницинче пичетленет.)

Кунта укçа упракан клиентсене тепĕр майпа та хавхалантарчĕç. Пĕрремĕш номинаци "За верность банку" ятлă. Çак чыса тивĕçес тесен банкпа 30 çултан кая мар сыхăну тытмалла, октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне упранакан укçа виçи 30 пин тенкĕрен кая пулмалла мар. Çатракассинчи Т.Т. Донскова çак номинацире çĕнтерсе пысăк укçана тивĕçрĕ.

Иккĕмĕшĕ "Почетный вкладчик" ятлă. Çак ята тивĕçме банкра 5 пин тенкĕрен кая мар упрамалла, РФ е СССР наградисен хуçи, вăрçă участникĕ пулмалла. Кунта Вомпăкассинчи Г.В. Дементьев çĕнтерчĕ, вăл та пысăк укçана тивĕçрĕ.

Муркашри уйрăм çулленех çак майсемпе укçа упракансене хавхалантарать.

Министерствăсен кунĕ

Ял çыннисемпе тĕл пулма

Ноябрĕн 15-мĕшĕнче, юн кун, районта Чăваш Республикин Юстици министерствин кунĕ иртет. Министерство ĕçченĕсем малтанах район пуçлăхĕпе тĕл пулаççĕ.

Районти ĕç коллективĕсенче пулса активпа тĕл пулма 4 ушкăн йĕркелеççĕ. Пĕрремĕш ушкăна ЧР юстици министрĕ В.П. Петров ертсе пырать. Ку ушкăнра çавăн пекех район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов, Чуманкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева. Вĕсем Чуманкасси ял тăрăхĕнчи активпа тĕл пулаççĕ, Чуманкасси шкулĕнче пулаççĕ.

Иккĕмĕш ушкăна министр çумĕ М.А. Кузьмин ертсе пырать. Ушкăнра унсăр пуçне район администрацийĕн йĕркелӳпе кадр, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова, Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Б.А. Сапожников. Ку ушкăн Ильинка ял тăрăхĕнче пулать, Ильинка шкулне çитсе курать.

Виççĕмĕш ушкăн ертӳçи – ЧР юстици министрĕн çумĕ Л.Н. Арзуманова. Ушкăнра çавăн пекех район администрацийĕн ĕçĕсен управляющийĕ А.В. Краснов, Măн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.П. Мазиков. Вĕсем Măн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче, «Сундырь-Хлеб» предприятире пулаççĕ.

Министр çумĕ В.Н. Капитонов ерсе пыракан ушкăн Оринин ял тăрăхĕнче, Оринин шкулĕнче пулса курать. Ушкăнра çавăн пекех районти ЗАГС пайĕн ертӳçи М.П. Рубцова, Оринин ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А.С. Суриков.

Хамăр инф.

"АПК аталантарасси" наци проекчĕ

Документсене уйăх çурă хушшинче тăратăр

Ĕçлекенсене, пуçаруллисене паян патшалăх та пулăшать. "АПК аталантарасси" те çакнах çирĕплетсе парать. Уйрăм хушма хуçалăхсене аталантаракансем çакна хăйсемех туйса илчĕç ĕнтĕ. Палăртмалла, наци проекчĕпе килĕшӳллĕн хушма хуçалăха аталантарма кредит парассине пирĕн район республикăра малти вырăнсенчен пĕринче. Анчах та кунта çакна асра тытмалла. Кредитпа тĕллевлĕн усă курнине документсемпе çирĕплетсен çеç çăмăллатнă кредит ял сыннишĕн çăмăллăхлă пулать. Ку тĕлĕшпе лару-тăру районта еплерех? Çакăн пирки калаçа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕнчен А.Н. ИВАНОВРАН. Акă мĕнле хурав пачĕ вăл:

– Ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпе 744 кредит 112425 пин тенкĕлĕх илнĕ пулсан, 741 кредитне 108225 пин тенкĕлĕх килти хушма хуçалăха аталантарма илнĕ. Анчах та 543ĕн çеç патшалăх пулăшăвĕпе тĕллевлĕн усă курнине тивĕçлĕ документсемпе çирĕплетрĕç: пурĕ 75 046 пин тенкĕлĕх. Ку вăл кредит илнисен 69,3 проценчĕ. Тĕпрен илсессĕн, асăннă пулăшăва районта пурăнакансем Перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕ тата "Россельхозбанк" урлă илеççĕ.

Перекет банкĕн Муркашри уйрăмĕ урлă çак вăхăт тĕлне пурĕ 552 кредит 70701,0 пин тенкĕлĕх илнĕ пулсан, 446 çын пурĕ 57226 пин тенкĕлĕх унпа тĕллевлĕн усă курнине çирĕплетнĕ. Ку вăл патшалăх пулăшăвне илнисем 80,9 проценчĕ пулать.

"Россельхозбанк" урлă килти хушма хуçалăха аталантарма кредита 185ĕн 36324 пин тенкĕлĕх илнĕ пулсан, вĕсенчен 97-шĕ çеç тивĕçлĕ документсене банка тăратнă: пĕтĕмпе 17820 пин тенкĕлĕх. Урăхла каласан, асăннă банкран кредит илекенсен йышĕн 49 проценчĕ.

– Альберт Николаевич, патшалăх пулăшăвне илнĕ чух та, чылай маларах та унпа тĕллевлĕн усă курнине çирĕплетекен документа 45 кун хушшинче кредит илнĕ банка тăратмалли çинчен ăнлантарнă. Кун пирки тепре аса илтерни ытлашши пулмĕ.

– Чăннипех те, халиччен кун пек çăмăллатнă кредитсем пулман. Палăртмалла, "АПК аталантарасси" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн килти хушма хуçалăха аталантарма паракан 14 процентлă кредитран 12 процентне патшалăх саплаштарать. Урăхла каласан, çакна валли субсиди уйăрать.

Калăпăр, вильăх сарайне тума 300 пин тенкĕлĕх кредит илнĕ, тейĕпĕр. Сарайне тӳрех хăпартса лартайман пулсан та, ăна валли стройматериалсем илни çинчен калакан документсене кредита алла илнĕ кун хыççăн уйăх çурă тапхăрта банка тăратмалла. Çавăн хыççăн çеç кредита илекенĕн счечĕ çине илнĕ суммăпа усă курнин 12 процентне саплаштарма патшалăх субсиди куçарать.

Çӳлерех асăннă кăтартусем вара çак утăма кредит илнисенчен пурте туманни çинчен калаççĕ. Çавăнпа та тепĕр хут асăрхаттарсах калас килет. Патшалăх пулăшăвĕпе тĕллевлĕн усă курнине çирĕплетекен документсене 45 кун хушшинче тăратмасан, илнĕ кредитпа усă курнăшăн çăмăллатнă пек 2 процентне çеç мар, 14 процентне пĕтĕмпех хăйсен тӳлеме тивет. Çавăнпа та илнĕ кредит çăмăллăхлă кредит пултăр тесен, вăхăта сая ямасăр тивĕçлĕ документсене хăвăр илнĕ банка тăратмалла.

– Альберт Николаевич, килти хушма хуçалăха аталантарма кредит илме хатĕрленекенсене мĕн каланă пулăттăр?

– Кам халиччен çак патшалăх пулăшăвне илмен, тархасшăн, хаваспах кĕтетпĕр. "Россельхозбанкăн" филиалĕ район администрацийĕн çуртĕнче ял хуçалăх управленийĕнче вырнаçнă. Çулталăк вĕçленичченех банкăн филиалĕ те уçăлать. Вăл ăçта вырнаçни пирки каярахпа пĕлтеретпĕр.

Эппин, патшалăх пулăшăвĕпе усă курăр, кредитпа тĕллевлĕн усă курнине вăхăтра çирĕплетĕр.

– Тавах калаçушăн, Альберт Николаевич.

Л. ПАВЛОВА калаçнă.

Административлă комиссире

Саккуна пăхăнмалла

Саккуна пăсма юрамасть. Кăна кашниех лайăх пĕлетпĕр. Анчах та район администрацийĕн административлă комисийĕнче пăхса тухакан тĕслĕхсем, акă, мĕн çинчен калаççĕ. Пур чухне те граждансем ăна пăхăнасшăн мар иккен.

Акă, октябрь уйăхĕнче административлă майпа йĕркене пăснăшăн 252 çынна пăхса тухнă. Вĕсенчен 68-шĕ – хĕрарăмсем, 184-шĕ – арçынсем.

Çак 252 çынран 154-шне штраф тӳлеттернĕ, 96-шне асăрхаттарнă. Пурĕ çапла майпа 51300 тенкĕлĕх штраф панă. Вĕсенчен 26900 тенкине шыраса илнĕ.

Халĕ сăмахăмăра айăпланакансем хăш енĕпе "сылăха" кĕни çине куçарар. 252 çынран 90-шĕ ЧР право йĕркине административлă майпа пăсни çинчен калакан саккунăн 10-мĕш статйине пăснă. Урăхла каласан, территории тирпей-илем хăтлăхне пăснă. Урама çӳп-çап кăларса тăкакансене, ăптăр-каптăра урама купалакансене пырса тивет çакă. Çавăн пекех 11 ĕç суту-илĕве тивĕçлĕ вырăнта йĕркелеменшĕн пăхса тухрĕç.

Административлă комиссине час-часах "хăнана" килекенсем вара – "киккирикĕсене" хĕртнĕ хыççăн килте çил-тăман кăларакан арçынсем. Çавнашкаллисем октябрьте 146-ăн пулнă.

Нумаях пулмасть вара районти административлă комисси хăйĕн тепĕр ларăвне ирттерчĕ. Ăна асăннă комисси председателĕ А.Н. Иванов ертсе пычĕ. Пурĕ 12 ĕç пăхса тухрĕç. Пурте халь çеç асăннă ЧР право йĕркине административлă майпа пăсни çинчен калакан саккунăн 19-мĕш статйине пăснă. Урăхла каласан, çемьере харкашу кăларнă. Вĕсенчен 5-шне асăрхаттарнă, 7 çынна штраф тӳлеттернĕ.

Л. ПАВЛОВА.

Юбилей

Саламлатпăр

Савнă мăшăра, юратнă аннене, хаклă кукамая, ырă кăмăллă хунямана - Шаптак-Муркаш ялĕнче пурăнакан **Валентина Григорьевна МАТВЕЕВАНА** 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Эс пурри пирĕн пуянлăх, сан куллу пирĕншĕн телей. Эс утас кунçулу такăр, ĕмĕрӳ вăрăм, сывлăху çирĕп, пурнăçу тулăх пултăр.

Салампа мăшăрĕ, икĕ хĕрĕ, икĕ кĕрӳшĕ, виçĕ мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.

Пирĕн юратнă анне, асанне, хуняма – Муркашра пурăнакан **Людмила Порфирьевна ВЛАДИМИРОВА** ноябрĕн 17-мĕшĕнче 75 çул тултарать. Çав ятпа эпир ăна чун-чĕререн тата ăшшăн саламлатпăр, ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр, ватлăх çулĕсене канлĕ ирттерме сĕнетпĕр. Тавах сана, сывăхран та çывăх çыннăмăр, пире çитĕнтерсе çын тунăшăн, пурнăçра пирĕншĕн чи ырă тĕслĕх пулса тăнăшăн. Нумай-нумай çул сывлăхлă пурăнса пире савăнтарсамччĕ!

Çу кунĕ пек сан кăмăлу пит ырă,
Ăна эс хаваспах паран пире.
Хуйха-суйха пĕлмесĕр эсĕ пурăн
Ытарайми илемлĕ тĕнчере.

Саламлаканĕсем: ачисем, кĕрĕвĕсем, мăнукĕсемпе прамăнукĕ, тăванĕсем.

Çырăнтару-2007

Çитес çул илсе тăма

Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2007 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма малалла çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнмалли хак – 148 тенкĕ те 26 пус.

Ертӳçĕсене район хаçатне ĕç коллективĕсенче вăй хуракансене ведомоçпе çырăнса парассине йĕркеleме ыйтатпăр. Район хаçачĕн редакцийĕ.